Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII · ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMIX

44 (7684) № ✻ Юн кун, 2009 çулхи июнĕн (çĕртме) 3-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери куна халалласа

## «Муркашра пурăнма пит аван!»

Район администрацийĕн çурчĕ умĕнчи вырăн июнĕн 1-мĕшĕнче ачасен хаваслă шавĕпе тулчĕ. «Ачалăхăн асамат кĕперĕ» – çапла ят пачĕç Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери куна халалланă уява Муркашра. Вăл асфальт çинче ачасем ӳкерчĕк тунинчен пуçланчĕ.

– Ачасем, мĕнле пурăнатăр?

– Питĕ лайăх! – хуравларĕç уява пуçтарăннă шăпăрлансем.

Чăннипех те, çапла калама сăлтавĕ те пур.

Район пуçлăхĕ, «Единая Россия» политика партийĕн районти уйрăмĕн политканашĕн ертӳçи Ю.А.Иванов та палăртрĕ çакна салам сăмахĕнче:

– Телейлĕ ачалăхăн кашни саманчĕпе савăнăр. Физкультурăпа спорт комплексĕнче сывлăхăра çирĕплетме, искусствăпа туслашма пĕтĕм майсем пур. Район пуласлăхĕ – сирĕн аллăрта, – терĕ Юрий Александрович. Уява килнĕ «Солнышко», «Путене» ача садне çӳрекенсене, Муркаш шкулĕпе искусство шкулĕн ачисене илемлĕ юрă-ташăпа килнĕшĕн парнесем пачĕ. Çавăн пекех «Единая Россия» партин районти уйрăмĕн политканашĕн секретарĕ пулнă май парти ячĕпе асăннă ушкăнсене çемçе тетте парса савăнтарчĕ. Ӳкерчĕксен, «Ман юратнă ялăм» сочинени конкурсĕн çĕнтерӳçисем те парнесемсĕр юлмарĕç.

Республикăри ача-пăча фончĕн представителĕсем вара пуçтарăннисене уявпа саламланă май районти реабилитаци центрĕн пурлăхпа никĕс базине аталантарма Раççейри ача-пăча фондĕнчен 5 пин тенкĕлĕх сертификат илсе килнине пĕлтерчĕç. Ачасемпе ашшĕ-амăшĕсене çавăн пекех Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин саламларĕ. Ачасем тĕрлĕрен вăйăсем вылярĕç. Физкультурăпа спорт комплексĕ хыçĕнчи пĕвере катамаранпа ярăнса савăнчĕç.

Çакнашкал уяв çав кун кашни ял тăрăхĕнчех иртрĕ.

**Л.ПАВЛОВА.**

## Уяв тивĕçлĕ шайра иртрĕ



Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери куна халалласа çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕрте те «Ачалăхăн асамат кĕперĕ» ятпа илемлĕ те хаваслă уяв иртрĕ.

Уява илемлĕ кĕвĕ янăратса юмахри савăнăçлă пикесем – Мăн Сĕнтĕр библиотекин ĕçченĕсем Т.Н. Ефимова тата М.В. Лаптева пуçларĕç. Мăн Сĕнтĕрти «Мечта» ача сачĕн воспитанникĕсем питĕ илемлĕ концерт хатĕрленĕ. Пĕчĕк шăпăрлансем юрларĕç, ташларĕç, сăвăсем каларĕç **(сăн ӳкерчĕкре)**. Вĕсене О.М. Иванова ертсе пычĕ.

Мăн Сĕнтĕрти çăкăр завочĕн директорне Л.Г. Ильгечкина пысăк тав сăмахĕ калас килет. Çак уява вăл ачасем валли пĕремĕк, печени, лимонад илсе килчĕ. З.А. Голышникова, Т.П. Мазикова, В.И. Николаев, Л.Г. Каргина та ачасене илемлĕ парнесем пачĕç. Мăн Сĕнтĕр райповĕ вара ачасене пылак канфетсемпе сăйларĕ.

Кайран вара ачасем асфальт çинче ӳкерчĕксем турĕç. Самантрах тавралăх улшăнчĕ темелле. Кунтах чечексем те çуралчĕç, пулăсем те ишме пуçларĕç... Çав хушăрах ачасем хĕвел ӳкерни питĕ савăнтарчĕ. Чăннипе вара хĕвел пулсан, анне пулсан тата ачасем пулсан кăна пурнăç илемлĕ те телейлĕ пулĕ.

Юлашкинчен тĕрлĕ-тĕрлĕ тĕслĕ шарсем пĕлĕтелле çĕкленчĕç.

**Т. ЕФИМОВА, Мăн Сĕнтĕр библиотекин методисчĕ.**

Ĕçлекен çынна хӳтĕлеме

## Виçĕ енлĕ килĕшӳ çине алă пусрĕç

Çак кунсенче районти социаллă тата ĕç хутшăнăвĕсене йĕркелесе пыракан 3 енлĕ комисси ларăвĕ иртрĕ. Комисси членĕсем чи малтан район администрацийĕ, ĕç паракансен пĕрлешĕвĕ тата профсоюз организацийĕсен Координаци Канашĕ хушшинчи социаллă партнерлăх çинчен 2006-2008 çулсене валли йышăннă Килĕшӳ вăхăчĕ вĕçленнипе ăна епле пурнăçланине пăхса тухрĕç. Каласа хăвармалла, район администрацийĕ асăннă Килĕшĕве пурнăçлас тĕллевпе экономика тата район территорийĕнче вырнаçнă ытти отрасльсен пур харпăрлăх формиллĕ организацийĕсен ĕçне йĕркелесе пырассипе мĕн пур мерăсене йышăнать. Район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ Э.И. Симакова юлашки 3 çулта туса ирттернĕ ĕçсем çинче чарăннă май çакна палăртрĕ.

Иртнĕ çул ял хуçалăх продукцине 2006 çулхинчен 24 процент ытларах туса илнĕ. Республикăри районсем хушшинче аш туса илессипе Муркашсем 3-мĕш вырăн йышăнаççĕ, сĕт туса илессипе – 1-мĕш вырăнта. Тĕш тырă туса илесси те виçĕ çул хушшинче 18 процент чухлĕ ӳсрĕ, çĕр улмие 27 процент ытларах çитĕнтерсе илнĕ. Кашни çăхран çăмарта илесси 314 штукран 324 штука çитрĕ.

Районта пĕчĕк формăллă хуçалăхсем аталанччăр тесе те тăрăшаççĕ. Виçĕ çул хушшинче 2284 граждана килти хушма хуçалăха аталантарма 365,0 млн. тенкĕ çăмăллатнă кредит панă.

Районти промышленность предприятийĕсем те кăтартусене 2,2 хут ӳстернĕ. Пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăпа пĕрле 1095,9 млн. тенкĕлĕх продукци туса кăларса сутрĕç.

Потребительсен рынокĕ те аталансах пырать. Виçĕ çул хушшинче ку отрасль кăтартăвĕ 59 процент чухлĕ ӳсрĕ. Çулсеренех çĕнĕ магазинсем уçăлаççĕ.

Социаллă тата инженери инфраструктурине аталантарма малтанхинчен 72 процент ытларах укçа-тенкĕ хывнă. Уйрăм çынсен тата нумай хваттерлĕ çуртсене 23 процент чухлĕ, 23,8 километр (13,4 километр ытларах ) çĕнĕ çул тунă.

Вăтам ĕç укçи юлашки виçĕ çул хушшинче 2,2 хут ӳсрĕ, 8434 тенкĕпе танлашрĕ.

Сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсем паянхи кун ыйтакан сиплев тата диагностика оборудованийĕсемпе пуянланчĕç. Шкулсенче Интернета тухаççĕ, вĕсенче интерактивлă тата мультимеди оборудованийĕсене вырнаçтарнă. Культура çурчĕсем те çĕнелсе çĕнĕ шая çĕкленме пуçларĕç.

Профсоюз организацийĕсен Координаци Канашĕн ертӳçи Ф.Ф. Григорьева палăртнă тăрăх, коллективлă договорсен пахалăхĕпе структури те лайăхланчĕ. Ĕç условийĕсене лайăхлатассин, ĕç сыхлавĕн ыйтăвĕсене профсоюз комитечĕсем куçран вĕçертмеççĕ. Ку тĕлĕшпе ятарлă программа пурнăçа кĕрет.

Ларура асăннă Килĕшĕве тишкернĕ хыççăн виçĕ ен хушшинчи 2009-2011 çулсем валли хатĕрленĕ çакнашкал Килĕшĕве пăхса тухса çирĕплетрĕç. Унта çавăн пекех социаллă - ĕç хутшăнăвĕсене йĕркелекен виçĕ енлĕ Комиссин составне, секретариатне, асăннă хутшăнусене йĕркелекен территори комиссийĕн ларусем ирттермелли регламентне те çирĕплетрĕç.

**Л. ТУКТИНА.**

Республикăра




***Тунти кун Шупашкарта пĕтĕм тĕнчери кинофестиваль ĕçлеме пуçларĕ. Кинофестиваль официаллă ĕнер каçхине уçăлчĕ. Пĕрремĕш куннех Светлана Дружинина, Александр Хван кинорежиссерсем, Анатолий Мукасей кинооператор, Юрий Чернов актер килсе çитрĕç.***

***Кинофестиваль июнĕн 1 – 6-мĕшĕсенче ĕçлет. Унăн программине райхаçатăн унччenхи номерĕсенче пичетленĕ.***

## Н. Федоров: «Курăмлă кăтарту пур»

Тунти кун Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.

Унччен вара, çу уйăхĕн 26-мĕшĕнче, РФ Президенчĕ Дмитрий Медведев Раççей Правительствин ячĕпе кăларнă хушăва алă пуснă. Унта «Атăл юхан шывĕ çинчи Шупашкар ГЭС-ĕн строительствин» проект документацийĕн шыв управĕн шайне йĕркеллĕ 68 метрлă паллă таран çĕклемелли пайне хатĕрлессине вĕçлемелли мерăсем йышăнмалли» çинчен каланă. Хушăва пурнăçлассишĕн яваплисене РФ Правительствин Председательне В. Путина, Чăваш Ен, Чулхула облаçĕн тата Мари Эл Республикин ертӳçисене Н. Федорова, В. Шанцева, Л. Маркелова палăртнă.

Николай Васильевич 50 миллиард тенкĕлĕх пысăк проект пурнăçланасса шанма май пуррине палăртнă. Çак инвестицисем 13 пин ĕç вырăнĕ йĕркелеме пулăшĕç.

Канашлура чылай ытти ыйтусене те тишкернĕ.

Район пурнăçĕнчен, экономика аталанăвĕнчен

## Малтисем паллă

Ĕçлекен çынна вăхăтра чыслани унăн хавхаланăвне ӳстерни пирки никамăн та иккĕленӳ çук. Çак чăнлăха район шайĕнче те тытса пыма тăрăшаççĕ. Ăна ырламалла. Апла пулсан çĕнĕ ӳсĕмсем кĕтни те кăлăхах пулмĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнче «Районти обществăлла выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче ĕçлекенсем хушшинчи 2008 çулхи экономика ăмăртăвĕн пĕтĕмлетĕвĕсем» йышăну çине алă пуснă.

«2008 çулхи чи лайăх сĕт ферми» ята тата 1-мĕш степеньлĕ дипломпа укçан премие «Герой» хуçалăхăн Çĕньял Шурчари сĕт фермин коллективĕ çĕнсе илнĕ.

«2008 çулхи măйракаллă шултра выльăх самăртакан чи лайăх ферма» ята тата 1-мĕш степеньлĕ дипломпа укçан премие «Свобода» хуçалăхăн Йӳтĕркассинчи ферма коллективĕ тивĕçнĕ.

«2008 çулхи чи лайăх сысна ферми» ята тата 1-мĕш степеньлĕ дипломпа укçан премие Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн Анаткассинчи сысна фермин коллективĕ тивĕç пулнă.

**Хамăр инф.**

Саламлатпăр



Муркашри вăтам шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен хисеплĕ ĕçтешĕмĕре – **Елена Калистратовна МИХАЙЛОВАНА** сумлă юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр.

Тапса тăракан çăл куç пек иксĕлми вăй-хăват, савăк кăмăл, интереслĕ уроксем, чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм кун-çул, çемьере килĕшӳ, пурнăçра телейпе ăнăçу сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: ĕçтешĕсем.**



Юратнă мăшăра, аннене, кукамая, хунямана, тăхлачăна, аппана – Ятман ялĕнче пурăнакан **Юлия Михайловна ПЕТРОВАНА** 55 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Вăрăм ĕмĕрлĕ пулма çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, ăнăçу сунатпăр. Санпа юнашар яланах хăвăн пек ырă кăмăллă та тӳрĕ чунлă тăванусемпе тусусем пулччăр. Кунсерен сăн-питӳнте йăл кулă çиçтĕр, телейĕ умăнтах тăтăр. Татах та нумай-нумай çул пирĕнпе юнашар пурăнма Турри пиллетĕрччĕ сана. Эс пуррипе тĕнче илемлĕ!

**Салампа: мăшăрĕ, хĕрĕсем, амăшĕ, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, тăхлачисем тата пур тăванĕсем.**